❑ ЕГОРОВА АННА СЕМЕНОВНА



# ЧĂВАШ ГИДРОНИМĔСЕН ПĔЛТЕРĔШ УШКĂНĔСЕМ

**Аннотаци**: Статьяра чăваш чĕлхинче шыв-шура ят панин уйрăмлăхĕсене тишкернĕ, чăваш гидронимĕсен пĕлтерĕш ушкăнĕсене палăртнă. Чăваш чĕлхинчи гидронимсене тĕпчевçĕ икĕ пысăк ушкăна уйăрать: çут çанталăк уйрăмлăхĕсене кăтартаканнисем (объект уйрăмлăхне кăтартаканнисем, çĕр пичĕн расналăхне кăтартаканнисем, ÿсен-тăран тата чĕр чун тĕнчин хăй евĕрлĕхне палăртаканнисем, географи объекчĕсен вырăнне кăтартаканнисем, объект шутне кăтартаканнисем, сăнарлă гидронимсем) тата çынпа е унăн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннисем (халăхăн пурлăх культурипе çыхăннисем, ăс-хакăл культурипе çыхăннисем, çын ячĕсенчен пулнисем, халăх ячĕсенчен пулнисем). Автор шухăшĕпе, шыв-шур ячĕпе унăн пĕлтерĕшĕ чылай чухне тӳр килеççĕ, анчах та гидронимăн чăн-чăн пĕлтерĕшĕ яланах çиелте выртман пирки кашни ятах уйрăм илсе тишкерме тивет.

**Тĕп сăмахсем***:* чăваш гидронимĕсем, шыв-шур ячĕсем, пĕлтерĕш ушкăнĕсем, çут çанталăк уйрăмлăхĕсем, çынпа унăн ĕçĕ-хĕлĕ.

## Çuvaş Hidronimlerin Anlamsal Grupları

**Özet**: Makalede Çuvaşçada “su” adlandırmasının özellikleri ele alınmış, Çuvaş hidronimlerinin anlamsal gruplarına değinilmiştir. Çuvaşçadaki hidronimleri araştırmacı iki büyük gruba ayırır: Doğanın özelliklerini gösterenler (Nesnelerin özelliklerini gösterenler, yeryüzünün özelliklerini gösterenler, bitki ve hayvan aleminin kendisine özgü özelliklerini gösterenler, nesnelerin sayısını gösterenler, benzeri hidronimler) ve insanlar ve onun faaliyetleri ile ilintili olanlar (Halkın maddi ve manevi kültürü ile ilintili olanlar, insan adlarından ve halk adlarından oluşanlar). Yazarın düşüncesine göre su adları ile bunların anlamları çoğu zaman örtüşmektedir. Ancak hidronimlerin gerçek anlamı her zaman açık olmadığı için her bir adı ayrıca ele alıp incelemek uygun düşmektedir.

**Anahtar Kelimeler***:* Çuvaş hidronimleri, su adları, semantik kısımlar, doğanın özellikleri, İnsanlar ve faaliyetleri.

**Semantic Groups of Chuvash Hydronyms**

**Abstract**: In this article, the features of water naming in Chuvash language are explored and semantic parts of the Chuvash hydronyms are discussed. The researcher divides the hydronyms in Chuvash language into two parts: the ones that display characteristics of nature (those that display characteristics of objects, earth, plant and animal kingdoms, those that displays numbers of objects and similar hydronyms) and the ones that are associated with human beings and their activities (those that are related to material and spiritual culture of the people, those that consists of human names and folk names) according to the writer's opinion, the names of water and their meanings often correspond to each other. However, as the real meanings of the hydronyms are not always clear, it is appropriate to discuss and examine each name separately.

**Keywords**: Chuvash hydronyms, waters names, parts of semantic, characteristics of nature, human beings and their activities

Шыв-шур ячӗсем – сӗм авалхи сӑмахсем, чылай чухне вӗсем çав ятлӑ хуласемпе ялсен ячӗсенчен те аслӑрах. Тӗрлӗ вӑхӑтра тата тӗрлӗ чӗлхе материалӗсенчен йӗркеленнӗ пирки гидронимсен пӗлтерӗшне уçса парас тесен чӗлхе тата халӑх историне аван пӗлмелле, вырӑнти географи уйрӑмлӑхӗсене шута илмелле.

Хамӑр ӗçре эпир чӑваш чӗлхинче шыв-шура ят панин уйрӑмлӑхӗсене тӗпчес, гидронимсен пӗлтерӗш ушкӑнӗсене тупса палӑртас тӗллев лартрӑмӑр. Тӗллеве пурнӑçлас тесе хамӑр картотекӑри 4 пине яхӑн гидронима тишкертӗмӗр, çапах та ушкӑнсене пайланӑ чух пӗлтерӗшӗ уçӑмлӑ, хальхи чӗлхе материалӗпе тӳрех ӑнлантарма пулакан ятсене çеç илтӗмӗр.

Шыв-шур ячӗсем ӑнсӑртран çуралман. Шыв-шура ят паракан çынсем чи малтанах географи объекчӗсен тӳрех курӑнакан паллӑрах енӗсене шута илнӗ. Гидронимсенче шыв тӗсӗ, температури, тути, çӗр пичӗн расналӑхӗ, ӳсен-тӑран тата чӗр чун тӗнчи т. ыт. те сӑнланнӑ. Çынсем çав паллӑсенчен пӗрне уйӑрса илнӗ те, вӑл вара ятра çирӗпленсе юлнӑ.

Çавӑн пекех шыв-шур ячӗсенче халӑхӑн кун-çулӗ, йӑли-йӗрки, ӗçӗ-хӗлӗ палӑрать. Çапла майпа гидронимсене пӗлтерӗш енчен икӗ пысӑк ушкӑна уйӑрма пулать:

1) çут çанталӑк уйрӑмлӑхӗсене кӑтартаканнисем;

2) çынпа е унӑн ӗçӗ-хӗлӗпе çыхӑннисем (Егорова 2010: 59).

Çут çанталӑк уйрӑмлӑхӗсене кӑтартакан гидронимсем чи авалхисем шутланаççӗ. Вӗсене хӑйсене çак ушкӑнсене пайлама пулать:

1) объект уйрӑмлӑхне кӑтартакан гидронимсем;

2) çӗр пичӗн расналӑхне кӑтартакан гидронимсем;

3) ӳсен-тӑран тӗнчин хӑй евӗрлӗхне палӑртакан гидронимсем;

4) чӗр чун тӗнчин хӑй евӗрлӗхне палӑртакан гидронимсем;

5) географи объекчӗсен вырӑнне кӑтартакан гидронимсем;

6) объект шутне кӑтартакан гидронимсем;

7) сӑнарлӑ гидронимсем (Егорова 2018: 185-186).

Объект уйрӑмлӑхне кӑтартакан гидронимсем хӑйсем ҫакӑн пек ушкӑнсене пайланаҫҫӗ:

1) объект тарӑнӑшне, калӑпӑшне, тӑршшӗне кӑтартаканнисем: *Тарӑн шыв, Тӗпсӗр кӳлӗ, Ӑшӑх куккӑр, Мӑн пӗве, Пысӑк шур, Пӗчӗк шур, Вӑрӑм кӳл* т. ыт. те;

2) объект кӳлепине кӑтартаканнисем: *Ҫавра кӳлӗ, Кукӑр кӳлӗ, Коккӑр пӗве, Тӳрӗ ҫырма, Шӗвӗр кӳлӗ, Юплӗ кӳлӗ* т. ыт. те;

3) шыв пахалӑхне (температурине, тӑрӑлӑхне, тутине, шӑршине) кӑтартаканнисем: *Сивӗ ҫӑл, Сивӗ ҫӑлкуҫ, Сишу (Сив шу), Тӑрӑ ҫӑл, Тӑварлӑ ҫӑл, Тутлӑ шыв, Шӑршлӑ шыв* т. ыт. те;

4) тӗсе пӗлтерекен паллӑ ячӗсенчен пулнӑ гидронимсем: *Хӗрлӗ кӳлӗ, Хура ҫырма, Шур пӗве, Симӗс кӳлӗ* т. ыт. те.

Тӗсе пӗлтерекен гидронимсене уйрӑммӑн тишкерсе тухӑпӑр. Чӑваш гидронимӗсенчи *хӗрлӗ* сӑмах ытларах чухне «хӗрлӗ тӑмлӑ» тенине пӗлтерет (*Хӗрлӗ ҫыр, Хӗрлӗ авӑр* т. ыт. те*)*, хӑш-пӗр чухне тутӑх тӗслӗ шыва палӑртать (*Хӗрлӗ ҫырма* т. ыт. те).

Органикӑллӑ япаласем нумай пулнӑран вӑрманти кӳлӗсем е вӑрмантан юхса тухакан шывсем чылай чухне хура тӗслӗ курӑнаҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсен ячӗсем час-часах *хура* сӑмахпа ҫӳреҫҫӗ (*Хора кӳлӗ, Хура шыв, Хура ҫӑл* т. ыт. те). Гидронимсенче *хура* сӑмах курӑс хутнипе, кайӑк-кӗшӗк вараланипе е ытти сӑлтавпа тасамарланнӑ шыва та палӑртма пултарать (*Хура кӳлӗ, Хура ҫыр* т. ыт. те). Нумай ҫӑлкуҫлӑ е тарӑн шыв-шур объекчӗсен ячӗсенче те *хура* сӑмах тӗл пулма пултарать (*Хура шыв, Хура ҫӑл* т. ыт. те).

Пирӗн картотекӑра «*сарӑ (сар*) + географи терминӗ» модельпе пулнӑ пӗр гидроним та ҫук. Эпир тупса палӑртнӑ гидронимсенче *сарӑ* сӑмах е *тӑван* (*Сартӑван, Сартӑван лачаки* т. ыт. те) е *хурӑн* сӑмахпа (*Сар хурӑн варӗ, Сар хорн (хурӑн) ай кӳлли, Сар хорн (хурӑн) шывӗ, Сар хурӑн ҫӑлкуҫӗ* т. ыт. те) ҫыхӑннӑ. Ку ятсем географи объекчӗсене палӑртнисӗр пуҫне киреметсене те пӗлтереҫҫӗ: *Сархорӑн киремечӗ, Сар хурӑн кӗлли, Сартӑван*. Ҫавӑнпа та *Сартӑван, Сархурӑн* йышши ятсенче *сар* сӑмах, пирӗн шутпа, тӗсе пӗлтермест, перс чӗлхинчи «аслӑ, тӗп» пӗлтерӗшлӗ сӑмахпа пӗр тымарлӑ. Киремет ячӗсемпе тӗрлӗ титула пӗлтерекен сӑмахсенчен пулса кайнӑ топонимсенче *аслӑ* тата *кӗҫӗн* сӑмахсем час-часах тӗл пулни те (*Аслӑ киремет, Кӗҫӗн киремет, Аслӑ Тархан, Кӗҫӗн Тархан* т. ыт. те) пирӗн шухӑша ӗнентерме пулӑшать. А. Никифоров шухӑшӗпе те, чӑваш топонимӗсенче *сарӑ* сӑмах «таса, сӑваплӑ» тенине пӗлтерет (Никифоров 1993: 3), анчах та эпир унӑн пур тӗслӗхӗсемпе те килӗшме пултараймастпӑр. Сӑмахран, *Юмансар* юхан шыв ячӗ «сӑваплӑ юман» пӗлтерӗшлӗ мар, ку гидроним, пирӗн шутпа, юман йывӑҫ ячӗ ҫумне *-сар* аффикс хушӑннипе пулнӑ.

*Шур* сӑмахлӑ гидронимсем тӗпӗнче е ҫыранӗсенче акшар е шурӑ чул пур шывсене палӑртаҫҫӗ: *Шур пӗве, Шур ҫӑл, Шор ҫӑл* т. ыт. те. *Шор тӑм вар шывӗ* гидроним ҫӗр уйрӑмлӑхне кӑтартать.

*Симӗс* сӑмахпа эпир пӗр гидроним анчах (*Симӗс кӳлӗ*) тупрӑмӑр. Кӳлӗ-пӗве шыв ӳсен-тӑранӗпе хупланса ларсан чӑвашсем *пӗвери (кӳлӗри) шыв симӗсленнӗ* теҫҫӗ. *Симӗ*с сӑмахпа гидронимсем ҫуккине, пирӗн шутпа, шыв симӗсленни яланхи паллӑ пулманнипе (ҫулталӑкӑн пӗр вӑхӑтӗнче кӑна пулнипе) ӑнлантарма пулать.

*Кӑвак* сӑмахпа пулнӑ *Кӑвак Атӑл* гидроним юрӑра кӑна тӗл пулать.

*Тăм шывĕ, Тăмлă кӳлĕ, Хăйăр кӳлли, Хăйăрлă шыв, Торф кӳлли, Торф лакăмĕ, Чул çырма, Чол авăр, Шыв кăпăк çырми* йышши гидронимсем çĕр пичĕн уйрăмлăхĕсене кăтартаççĕ.

Гидронимсем ӳсен-тăран тĕнчин хăй евĕрлĕхне те палăртма пултараççĕ. Чăваш чĕлхинче йывăç (*Йăмраллă вар, Çирĕклĕх, Çӳçеллĕ вар* т. ыт. те), шывлă çĕрте ӳсекен ӳсен-тăран (*Хăмăшлă вар, Мăклă кӳлĕ, Хăяхлă вар, Чаканлă* т. ыт. те), курăк (*Хупах çырми, Шрут çырми* т. ыт. те) ячĕсенчен пулнă гидронимсем анлă сарăлнă.

Шыв-шура ят панă чух çынсем çав тăрăхри чĕр чунсене те шута илнĕ. Чăваш чĕлхинче пулă тата шыври ытти чĕр чунсен ячĕсенчен пулнă гидронимсем чылай: *Çăрттан аври, Карас кӳлли, Рак кӳлли* т. ыт. те. Кайăк ячĕсенчен ытларах кӳлĕ, шурлăх ячĕсем пулаççĕ: *Тăрна шурĕ, Акăш кӳлли, Текерлĕк кӳлли* т. ыт. те. Килти вырьăх-чĕрлĕх, тискер кайăк ячĕсенчен пулнă гидронимсем те тĕл пулаççĕ (*Сурăх каççи шывĕ, Ăйăр кӳлли, Кашкăр çырми, Вăкăр çăлĕ* т. ыт. те), анчах чĕр чун ячĕ тĕл пулакан кашни гидронимах вăл е ку чĕр чун ячĕпе çыхăннă теме çук. Сăмахран, *Кашкăр çырми, Качака варĕ* гидронимсем чĕр чунсемпе мар, йăх ячĕсемпе çыхăнма пултарнă. Çавăнпа кашни гидронима уйрăм тишкерме тивет.

Гидронимсем шыв объекчĕсен вырăнне те кăтартма пултараççĕ. Чи малтанах ку ушкăна урăх географи объекчĕсемпе танлаштарса пулнă шыв-шур ячĕсем (*Çырма çăлĕ, Вăрман пĕви, Улăх кӳлли* т. ыт. те) кĕреççĕ. Объектăн пĕр-пĕр пайне кăтартакан гидронимсем *вăрă (вăрри), кукăр (кукри), пуç (пуçĕ), пыр (пырĕ), тăрă (тăрри), юпă (юппи)* сăмахсем хушăннипе пулса кайнă: *Ункă пуçĕ, Çавал кукри, Атăл пырĕ, Сĕве юппи* т. ыт. те. Пĕр пек географи объекчĕсем пĕр-пĕринпе танлаштарсан ăçтарах вырнаçнине кăтартакан гидронимсенче *çӳлти (Çӳлти çăл), анатри (Анатри çăл), малти (Малти пĕве), кайри (Кайри пĕве)* йышши сăмахсем тĕл пулаççĕ.

Шыв-шур ячĕсем хисепе палăртакан сăмахсем хушăннипе те йĕркеленеççĕ: *Пĕччен пĕве, Ик çăл, Йĕкĕр авăр, Виç лупашка, Пилĕк авăр, Çич кӳл, Вун ик авăр, Вăтăр çăл* т. ыт. те. Эпир пухнă тĕслĕхсенче *пĕр, ик(ĕ), виç(ĕ), тăват(ă), пилĕк* хисеп ячĕсем чăн хисепе палăртаççĕ, *çич(ĕ), тăхăр, вун икĕ* хисеп ячĕсем – чăннине çывăх хисепе, *вăтăр, хĕрĕх, çич вон (çитмĕл), виç çĕр* хисеп ячĕсем питĕ нумай хисепе. Хальтерех пулса кайнă гидронимсенче йĕрке хисеп ячĕсем йышлă (*Пĕрремĕш пĕве, Иккĕмĕш пĕве, Виççĕмĕш пĕве* т. ыт. те), вĕсем юнашар вырнаçнă объектсене уйăрма пулăшаççĕ.

Чăваш хăйĕн пуплевне яланах сăнарлă тума тăрăшать, тĕрлĕрен илемлĕх мелĕпе усă курать. Чăваш чĕлхинче *Ылтăн шу, Çутă кӳлĕ, Суя çăл, Чун уççи çăлĕ, Январь çăлкуçĕ, Февраль çăлкуçĕ* йышши гидронимсем час-часах тĕл пулаççĕ.

Çынпа е унăн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă гидронимсене хăйсене 4 ушкăна уйăратпăр:

1) халăхăн пурлăх культурипе çыхăннă гидронимсем;

2) ăс-хакăл культурипе çыхăннă гидронимсем;

3) çын ячĕсенчен (антропонимсенчен) пулнă гидронимсем;

4) халăх ячĕсенчен (этнонимсенчен) пулнă гидронимсем.

*Курăс кӳлли, Утар çырми, Авăн çăлĕ, Тимĕрçĕ кӳлли* йышши гидронимсем авалхи чăваш халăхĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, хуçалăхĕ çинчен каласа кăтартаççĕ. Çавăн пекех шыв-шур ячĕсем чăвашсен

авалхи тĕнче курăмĕ, тĕн ĕненĕвĕ, йăли-йĕрки çинчен пĕлме пулăшаççĕ: *Чӳк çырми, Уй чӳк çăлĕ, Киремет кӳлли, Йĕрĕх çăлĕ* т. ыт. те.

Гидронимсенче авалхи титулсем те упранса юлнă: *Кăлава çырми, Мăрса кӳлли, Улпут кӳлли* т. ыт. те.

Çын ячĕсенчен ытларах пĕчĕк çырма-çатра, кӳлĕ-пĕве, çăл ячĕсем пулса кайнă. Вĕсем авалхи чăваш ячĕсенчен (*Паччан пĕви, Тени кӳлли, Ухварин вар*), вырăс чĕлхи урлĕ йышăннă ятсенчен (*Исай кăлати, Микулай çăлĕ, Макçăм пĕви*), хушаматсенчен (*Леонтьев пĕви, Петрухинсен çăлĕ, Орлов пĕви*), хушма ятсенчен (*Сталин пĕви, Кăчăрма кӳлли, Ляпак* кӳлли), ятпа ашшĕ ячĕн пĕрлешĕвĕнчен (*Петĕр Васильч çалĕ, Валерий Палч кăлати*) йĕркеленнĕ (Егорова 2014: 81-85). Антропонимсен хăш тĕсĕнчен пулнине кура гидронимсем хăш вăхăтра пулса кайнине те пĕлме пулать. Сăмахран, ятпа ашшĕ ячĕн пĕрлешĕвĕнчен пулнисем иртнĕ ĕмĕрте сарăла пуçланă.

Чылай чухне гидронимсем чăваш халăхĕпе çыхăнура пулнă халăхсемпе ăрусен ячĕсемпе çыхăнаççĕ (*Мишер кӳлли, Пăртас Çавалĕ, Çармăс кӳлли*). Хушăран шыв-шур ячĕсенче çыхăнура пулман халăх ячĕсем те тĕл пулма пултараççĕ. Кун йышши гидронимсем чылай чухне хушма ятсенчен пулса кайма пултарнă. Сăмахран, *Француз çăлĕ* ятра этноним хушма ят урлă гидронима куçнă.

Çапла вара, шыв-шур ячĕсене пĕлтерĕш енчен тишкернĕ хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳсем тума пулать:

1) шыв-шура ытларах çут çанталăк географи уйрăмлăхĕсене, вăл этем пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине кура ят панă;

2) гидронимсене тĕпчени халăх историне, йăли-йĕркине пĕлме пулăшать;

3) шыв-шур ячĕпе унăн пĕлтерĕшĕ чылай чухне тӳр килеççĕ, анчах та гидронимăн чăн-чăн пĕлтерĕшĕ яланах çиелте выртман пирки кашни ята уйрăм тишкерме тивет.

**Усă курнă литература**

Егорова, А.С. (2010). *Чувашская гидронимия*, Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 198 с.

Егорова, А.С. (2014). “Личные имена в чувашских гидронимах”. *Ашмаринские чтения: сб. материалов IX Междунар*. науч*.-практ. конф.* / сост. и отв. ред. А.М. Иванова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, С. 81-85.

Егорова, А.С. (2018). “Лексико-семантический анализ чувашских гидронимов”. *Национальные языки и литературы в поликультурных условиях: сб. науч. статей. Вып. IV* / отв. ред. А.Д. Ахвандерова. Чебоксары: Чуваш. гос.пед.ун-т, С. 184-187.

Никифоров, А. (1993). “Тайна тюркских топонимов”. *Вучах*. 1 №.

